Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

53 (7370) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи июнĕн (çĕртме) 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Республика кунĕ çӳллĕ шайра иртрĕ









Çывăх кунсенчех муниципалитет тытăмĕсен хушшинче 2007 çулхи Республика кунне ăçта ирттерессине татса парас тĕллевлĕ конкурс пуçласси çинчен пĕлтерессĕ. Çакăн пирки тунти кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе ирттерекен йăлана кĕнĕ канашлура пĕлтернĕ.

Республика кунне уявланин кăтартăвĕсемпе экономика аталанăвĕпе сутуилӳ министрĕ Иван Моторин тата культура министрĕн пĕрремĕш çумĕ Виктор Бондарев паллаштарнă. Кăçал пирĕн патра йĕркеленĕ мероприятисем тĕлĕшпе питĕ пысăк интерес пулнă. Регионсен “Регионсем – чикĕсĕр ĕçтешлĕх” пĕрлехи куравĕнче Раççейĕн тата ют çĕршывсен 25 регионĕнчи 394 предприяти хăйсен çитĕнĕвĕсемпе паллаштарнă, çакă 2005 çулхинчен чылай нумайрах. Кăçал выставкăна 162 пин çын ытла пырса курнă.

Курав кунĕсенче ĕçлĕ калаçу нумай пулнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, выставка ĕçленĕ тапхăрта 140 килĕшӳ тунă, пĕрле çыхăнса ĕçлес кăмăл пуррине палăртса 415 килĕшӳ ала пуснă. Вĕсем – республикăри предприятисен миллиард-миллиард тенкĕлĕх заказĕсемпе таварĕсем. Регионсен “Раççей конкурентлăхĕ. Регион аспекчĕ” пĕрлехи конференцине Раççей Федерацийĕн 10 регионĕнчен, Швейцарипе Болгарирен, Украинăпа Германирен тата Казахстанран килнĕ 450 çын хутшăннă.

Уяв кунĕсенче пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсене пурнăçлассипе тата финанс ыйтăвĕсемпе çыхăннă “çавра сĕтелсен” ярăмĕ пулнă. Вĕсене йĕркеленĕ май та чылай килĕшӳ çуралнă. Калăпăр, Комсомольски районĕнчи “Урожай” ЯХПК Францири пĕр компанипе сĕт-çу ферми валли оборудовани туянасси пирки калаçса татăлнă.

Пĕтĕм Раççейри “Раççей çăл куçĕсем” фестивале Раççейĕн 39 субъекчĕн тата 6 çĕршывăн пултарулăх коллективĕсем хутшăннă. Чăваш коллективĕсене шута илсен вара унта хутшăннисен шучĕ 7 пин çынран та иртет.

Пĕтĕм Раççейри “Ăстасен Руçĕ” конкурса Раççей Федерацийĕн 18 субъекчĕн 87 ăсти килнĕ.

Промышленноç тата энергетика министрĕ Юрий Волошин Казахстанăн Чăваш Ене килнĕ делегацийĕпе пиравăр оборудованийĕ кăларакан пĕрлехи предприяти уçма калаçса татăлни çинчен хыпарланă.

**ЧР ПА пресс-служби.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: «Регионсем – чикĕсĕр килĕштерсе ĕçлесси» куравра Муркаш районĕн ĕçĕ-хĕлĕпе райадминистрацин экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова паллаштарать; Çурçĕр Осетирен килнĕ артистсем; Улатăрта çĕнĕ вокзал уçăлчĕ; П.Я. Мазуркин «Ăстасен Раççейĕ» конкурсра.**

## Уява – ĕçлеме



**Республика кунне уявлама пысăк хăнасемпе ĕçлĕ делегацисем те сахал мар килчĕç. РФ Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министрĕ Михаил Зурабов, Федерацин Атăлçи округĕн полпречĕ Александр Коновалов, Тĕнче банкĕн Раççейри ĕç тăвакан директорĕ Кристалина Георгиева, США, Казахстан Республикин, Саратов облаçĕн тата ыт. делегацийĕсем пулчĕç.**

**Сăн ӳкерчĕкре: М. Зурабовпа Н. Федоров ачасене пысăк технологипе сиплекен центра уçаççĕ.**

### Республикăра

## Çĕнĕ тĕп инспектор

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Александр Коновалов федерацин Чăваш Республикинчи çĕнĕ тĕп инспекторне çирĕплетнĕ.

Полпредăн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх, вăл – Руслан Тихонов, маларах Раççей Федераци Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнче полпред аппаратĕнче тĕрĕслев департаменчĕн ертӳçи пулнă.

2000 çулхи чӳк уйăхĕнчен пуçласа Чăваш Енре федерацин тĕп инспекторĕ пулнă Александр Муратов ку должноçран тивĕçлĕ канăва кайнă.

### Райадминистрацире

## Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн

Район администрацийĕн пуçлăхĕн июнĕн 19-мĕшĕнчи 164 № йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

Ял хуçалăхĕнче нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн:

**Галина Борисовна АЛЕКСАНДРОВАНА**, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри сысна пăхакана,

**Алевтина Николаевна АЛЕКСЕЕВАНА**, “Чемеево” хуçалăхри уй-хир ĕçченне,

**Роза Михайловна ВАСИЛЬЕВАНА**, “Чемеево” хуçалăхри уй-хир ĕçченне,

**Александр Матвеевич ГРИГОРЬЕВА**, Ленин яч. хис. хуçалăхри механизатора,

**Елена Евтихеевна ЕГОРОВАНА**, “Чемеево” хуçалăхри пăру пăхакана,

**Рудольф Викторович ИШТОНОВА**, “Чемеево” хуçалăхри тракториста,

**Римма Пантелеймоновна РОДИОНОВАНА**, Ленин яч. хис. хуçалăхри ветеринари санитарне,

**Светлана Александровна ИВАНОВАНА**, Ленин яч. хис. хуçалăхри ĕне сăвакана,

**Мария Ивановна НИКОЛАЕВАНА**, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри сысна пăхакана,

**Людмила Валентиновна ПОНОМАРЕВАНА**, “Сеятель” хуçалăхри уй-хир ĕçченне,

**Валентина Михайловна СМИРНОВАНА**, “Чемеево” хуçалăхри сысна пăхакана.

Çурхи ака-сухара ăнăçлă ĕçленĕшĕн:

**Павел Павлович СТОЛЯРОВА**, “Сеятель” хуçалăхри тракторист-машиниста.

Нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн тата обществолла ĕçе активлă хутшăннăшăн:

**Геннадий Николаевич ИГНАТЬЕВА**, “ВАЮВ” чикĕллĕ яваплăхлă общество директорне,

**Нина Егоровна КУСТОВАНА**, “Моргаушавтотехсервис” уçă акционерла обществăри инженера.

### Наци проекчĕсене пурнăça кĕртсе

## Кредит илекенсем йышлансах пыраççĕ

РФ Президенчĕ В.В. Путин сĕннĕ 4 наци проектĕнчен пĕри – “АПК аталантарасси”. Асăннă наци проекчĕ ялта пурăнакан кашни çыншăн чăн-чăн пулăшу иккенне районта пурăнакансем кашни кунах ытларах та ытларах ăнланма пуçларĕç ĕнтĕ. Çакна асăннă кредита килти хушма хуçалăха аталантарма илекенсен йышĕ ӳссе пыни те яр уççăнах кăтартса парать.

Ĕнерхи кун тĕлне 105 çын асăннă патшалăх пулăшăвне 12 миллион та 928 пин тенкĕлĕх илме документ хатĕрлесе панă. Çав шутран 35-шĕ “Россельхозбанк” урлă 6 миллион тенкĕлĕх, 70-шĕ Перекет банкĕн Муркашри филиалĕ урлă 6 миллион та 928 пин тенкĕлĕх.

Ĕнерхи кун тĕлне вара килти хушма хуçалăха аталантарма районĕпе пурĕ 154 çын асăннă патшалăх пулăшăвне 22 миллион та 896 пин тенкĕлĕх илнĕ. Çав шутран 62 кредита 11 миллион та 485 пин тенкĕлĕх “Россельхозбанк” урлă, 91 кредита 11 миллион та 111 пин тенкĕлĕх – Перекет банкĕн Муркашри уйрăмĕ урлă.

Палăртмалла, уйрăм хушма хуçалăха аталантарма патшалăх пулăшăвне илессипе Ярапайкасси ял тăрăхĕ уйрăмах хастар ĕçлет. Пĕтĕмпе кунта пурăнакансем 24 кредит 3 миллион та 654 пин тенкĕлĕх илнĕ.

Çавăн пекех Муркаш ял тăрăхĕнче 19, Оринин ял тăрăхĕнче 15, Юнкăпа Катькас ял тăрăхĕсенче 12-шер, Турай ял тăрăхĕнче 11, Уйкас Янасал, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсенче пурăнакансем 10-шар çын илнĕ патшалăх пулăшăвне.

Хаçат вулакансем! Кӳршĕсенчен эсир те ан юлăр. Патшалăх пулăшăвне панă чух илсе юлма тăрăшăр. Çакă усăллине кĕске вăхăтрах ăнланса илĕр. Килти хушма хуçалăха аталантарнă çĕрте патшалăх пулăшăвĕпе усă курнă вăхăтра хăвăрăн ĕç укçипе урăх тĕллевпе усă курма пултаратăр. Пĕр сăмахпа каласан, хăвăра пурнăçра çирĕпрех туйма пуçлатăр. Ку вара пурнăçра çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эппин, патшалăх пулăшăвĕпе усă курмасăр ан юлăр.

**Л. ПАВЛОВА.**

### Симĕс ĕç çи

## РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ИЮНĔН 27-МĔШĔ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ

**Колонкăсенче: 1. Нумай çул ӳсекен курăксем çулнă (гектарпа). 2. Нумай çул ӳсекен курăксем çулнă (процентпа). 3. Утă хатĕрленĕ (тоннăпа). 4. Утă хатĕрленĕ (процентпа).**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 30 | 8 | 20 | 3 |
| “Волга” | 80 | 32 | 0 | 0 |
| “Восток” | 80 | 34 | 101 | 45 |
| “Герой” | 40 | 11 | 10 | 1 |
| “Агро-Урожай” | 40 | 69 | 10 | 10 |
| К. Иванов яч. хис. | 125 | 39 | 10 | 2 |
| Ильич яч. хис. | 100 | 21 | 65 | 10 |
| “Колос” | 0 | 0 | 0 | 0 |
| Ленин яч. хис. | 80 | 14 | 40 | 7 |
| АФ “Лидер” | 50 | 11 | 15 | 2 |
| “Моргаушская” | 50 | 60 | 0 | 0 |
| ООО “Нива” | 20 | 7 | 10 | 3 |
| “Оринино” | 216 | 35 | 40 | 6 |
| “Передовик” | 40 | 4 | 20 | 4 |
| “Свобода” | 150 | 33 | 80 | 7 |
| “Сеятель” | 20 | 3 | 5 | 2 |
| Суворов яч. хис. | 80 | 15 | 30 | 4 |
| АФ “Рассвет” | 65 | 12 | 10 | 1 |
| АФ “Нива” | 0 | 0 | 0 | 0 |
| “Ударник” | 500 | 39 | 170 | 11 |
| “Хлебороб” | 20 | 5 | 5 | 1 |
| Чапаев яч. хис. | 80 | 20 | 35 | 5 |
| “Чемеево” | 55 | 20 | 20 | 5 |
| Чкалов яч. хис. | 30 | 10 | 0 | 0 |
| КФХ Михайлов А.Н. | 20 | 10 | 10 | 7 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **1971** | **18** | **706** | **6** |

### *Саламлатпăр*



“Передовик” ял хуçалăх производство кооперативĕнче 35 çул бухгалтерта ĕçлекен **Раиса Михайловна КАРПОВАНА** 55 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.

Эсĕ хуçалăх аталанăвĕшĕн туса ирттернĕ ĕçӳсем ĕмĕр-ĕмĕр ял-йыш асĕнче пурăнĕç. Кăмăлупа ĕçлес пултарулăху малашне те ан иксĕлччĕр, татах нумай çул вырăнти çынсемпе килĕшӳллĕ пурăнма çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

Тавах сана эсĕ пурришĕн!
Хĕвел çути пек йăл-кулу.
Тавах сана ăс-тăн панишĕн,
Асран тухмасть ăшă аллу!
Çухалмаççĕ нихăçан
Пил панă сан сăмаххусем.

Тăванусем чунтан юратнăран –
Кĕрекере ăш-пиллĕ юрăсем.
Тав тăватпăр сана чĕререн,
Манас çук ăшшуна ĕмĕрне.
Мухтанатпăр санпа çулсерен,
Тĕслĕхре тытатпăр ĕçӳсене.

**Ăшшăн саламласа “Передовик” ял хуçалăх производство кооперативĕн дирекцийĕпе ĕçченĕсем.**